мар [illegible] аттай

# Ҫамрӑк хунав

ВАШИСТАТ [illegible] ШКАР

32-19

МАРК АТТАЙ

# ÇАМРĂК ХУНАВ

(С Ă В Ă С Е М)

г. Чебо-сар.

Ҷăвашиздат 1932 Шупашкар

Редактор Г. И. Краснов.
Техн. редактор П. И. Кузьмина.
Обложка работы худ. А. Демидова.
Сдано в производство 24/X—32 г.
Подписано к печати 3/IX—32 г.

Типография № 2 Чувашгиза в г. Алатыре, ЧАССР.
Чувашлит № 1534. Заказ № 2570. Тираж 5100 экз.

# Кĕрешӳ сăввисем

## М а л а л л а!

Совет влаçĕ мана
Вăй-хал паҭĕ,
Çавăнпа та çĕкленҭĕ
Ҭĕре.
Мура кайтăр текех
Пуп апаҭĕ,—
Харампыр кирлĕ мар
Тĕнҭере.
Мухтамасп пуйан çын
Хĕрне халĕ,
Кирлĕ мар „хитре“ симĕс
Шăна—
Сывă пултăр Октăпĕр
Йалавĕ!
Йаланах çирĕп тытăп
Ăна.
Ĕççыннин ирĕкне
Мухтамашкăн

КН... ПАЛАТА
г. Чебо... Чувашской АССР
... 25.

Шӑтса тухрӗ поеҫийӗм
Ман,
Кам унта кулака
Ҫуптӑвасшӑн?—
Ман умра вӑл
Киревсӗр тӑшман.
Йантӑра, ӗҫпеле пиҫнӗ
Сасӑ,
Кирлӗ мар кивӗ пурнӑҫ
Мана.
Ей, йулташ! Ес—кулакшӑн
Пулсассӑн
Питӗнтен--лаҫ! суратӑп
Сана.
Пурӗпӗр кулака
Пӗтеретпӗр,
Харампырӑн тӗнҫийӗ—
Вилет.
Ӗҫпеле пиҫӗхсе
Ӳснӗ епӗр,
Алра пирӗн
Утарнӗк пилеҫӗ.
Епир
Пӗрлешсе пурӑнатпӑр,
Ҫӗнететпӗр таптаннӑ

Çĕре,
Пуршуйсен сăннине
Касса тататпăр,
Хăруш мар, çĕнтереймĕç
Пире!
Ей! йулташ, тавралла
Пăх-ха, авă,—
Кохоссем ыталарĕç
Йала,
Шăтса ӳсрĕ çĕршер
Хапрăк-савăт...
Вĕçтеретпĕр епир
Малалла!
Пуршуаçи хайаррăн
Шăртланђĕ,
Каллех йун ĕçесшĕн
Тăшман.
Советăн çĕршывĕ
Вăйланђĕ,—
Пуршуаçи
Хавшарĕ пайан.
Киттай!
Мĕнђухлĕ йун йухрĕ?
Йаппони пуршуйĕ
Сикет,

Тупăпа вăл, штыкпа
Вăрçа тухрĕ—
Перет те ҫикет!
Епир—
Çĕршыва вăйлататпăр;
Çĕнететпĕр таптаннă
Çĕре,
Кунран-кун малалла
Варкăшатпăр,—
Пуршуйсем çĕнтереймĕç
Пире!
Епир—
Ĕçпеле пиçнĕ халăх:
Кунран-кун машинлатпăр
Йала,
Çурататпăр çĕршер
Хапрăк-савăт—
Малаллах, йулташсем,
Малалла!
Совет влаçĕ мана
Вăй-хал паҫĕ,
Çавăнпа та çĕкленҫĕ
Ҫĕре,
Мура кайтăр текех
Пуп апаҫĕ,—

Харампыр кирлĕ мар
Тĕнђере.
Мухтамасп пуйан çын
Хĕрне халĕ,—
Кирлĕ мар „хитре“ симĕс
Шăна.
Сывă пултăр Окт̌апĕр
Йалавĕ!
Йаланах çирĕп тытăп
Ăна.
Ĕççыннин ирĕкне
Сыхламашкăн—
Кунран-кун вăй ӳсет
Манпала,
Тĕнђипех револђутси
Тăватпăр:
Малаллах, йулташсем!
Малалла!

1932 ç.

Чуваш... книжная ...
г. Чебоксар... Чуваш... АССР
Абонем... № 25.

## Колхосра.

Тăван йалăм—Çĕнĕ йал
Утаў малалла,
Тытрăм колхос йалавне
Епĕ те алла.

Йанăратăр лайăхрах
Пĕрлешўллĕ сас!
Çĕнĕ ĕçе мухтаса
Йурă йанăратас

Вĕтĕр-шакăр анаран
Ан кĕт пархатар,
Пайтах тăкрăм,—сахал мар
Епĕ хура тар.

Йанăратăр лайăхрах
Çĕнĕ ĕçшĕн сас!
Колхос ĕçне мухтаса
Сăвă шăратас

Ситĕ сана, Укахви,
Йумах калама,

Вăхăт çитрĕ хăвăртрах
Вăрлăх аллама.

Йанăратăр лайăхрах
Хурçăланнă сас!
Кĕтĕм савнă колхоса—
Вăрлăх тасатас.

Анне, есĕ кунашкал
Текех ан кĕрле,
Çăва тухсан халăхпа
Ĕçлĕпĕр пĕрле.

Йанăратăр лайăхрах
Пĕрлешӳллĕ сас!
Колхос ĕçне мухтаса
Уншăн тăрăшас.

Кулак Çтаппан сахал мар
Кулђĕ халăхран,
Çĕрђĕ тинех вăл тымар—
Çурђĕ колхосра.

Йанăратăр лайăхрах
Ĕçпе пиçнĕ сас!
Кулаксене кăкласа
Йала тасатас.

Айтăр ҫасрах, ҫухăнсем,
Кĕрĕр колхоса,
Мĕн латти пур тек уншек
Пĕҫҫен пурăнса?

Йанăратăр лайăхрах
Ĕҫпе писнĕ сас!
Кивĕ куна аркатса,
Пурнăҫа йусас.

Пурнăҫ лайăх ҫăн-ҫăнах
Пĕрле пурăнсан,
Унта кăна кун-ҫулу
Ҫăмăлланĕ сан.

Йанăратăр лайăхрах
Колхоссемшĕн сас!
Кĕтĕм епĕ колхоса—
Уншăн тăрăшас!

1931 ҫ.

## Уҫҫана.

—Ей, кала-ха, Уҫҫана,
  Мĕншĕн куҫҫанан?
Иртсе кайнă вăхăтна
  Аса илтĕн-им?
— Ех, йулташăм Кĕтерин
  Кӳтрĕм ҫав тери,
Ĕлĕк ҫунтăм тарҫăра—
  Ĕнтĕ пĕлтĕн-и?
Ҫавăнпа та иртнине
  Астуса илсен—
Ҫунăм кӳтсе килҫĕ
  Виҫ-тăват хутҫен.
Хуйхă пулҫĕ тарăн,
  Тарăн та ҫăра,—
Тăхăр ҫул, мăнтарăн,
  Ҫунтăм тарҫăра!
Кунĕн-ҫĕрĕн ĕҫ-ҫĕ:
  Хĕрхенместхуҫа,
Ҫĕрĕллех ҫийетҫĕ
  Ман тăлăх пуҫа.

Арăмĕ те кулҫĕ
Шыҫмак Тимуххан,
Кунăм-ҫулăм пулҫĕ—
Пăрăҫ та сухан!
—„Йытă есĕ,йытă!“
Терĕҫĕ мана,
Хĕсĕрлерĕҫ хытă.
Еккей, самана!

Вилесле ĕҫлеттĕм,
Ырă кун курман,
Хĕнетҫĕҫ, йĕреттĕм—
Куҫҫуљ йухрĕ ман.
Шутламанҫҫĕ епĕ
Телей курасса,
Текех тыттаратҫĕҫ
Мана ураса—

Аранах йăванҫĕ
Ҫирен йывăр ҫул,
Кĕмсĕртетсе анҫĕ
Вунҫиҫҫĕмĕш ҫул!
Астăватăп лайăх
Халĕ те ăна,
Тамăкрап хăтарҫĕҫ
Тинех ҫухăна!

Пуйансем манерсӗр
  Ҫиленҫӗҫ ҫӑнах,
Вӗсем ҫуптӑваҫҫӗ
  Микул патшанах.
Мана Совет влаҫӗ
  Ҫалҫӗ хӗнхуртан:
Хӑт арҫын, хӑт арӑм—
  Пултӑмӑр пӗр тан.
Сывӑ пултӑр Ленин!—
  Вӑл ман ҫӗрере...
Епӗ хӗпӗртерӗм
  Ҫткӑ тӗнҫере.
Хуйхӑ ҫук тек халӗ,
Ҫӗкленет Совет,
  Аламра куратӑн—
Ленинла пилет!

1932 ҫ.

—

## Пурнăç—кĕрешÿ.

Çамрăк вăхăт
Иртрĕ хăвăрт кĕрлесе,
Ђут йулаттăм
Урлă пирлĕ ÿпĕнсе!

*
* *

Хура пÿрт ĕлĕкрех
Ман йăвађђĕ,
Асăмрах халĕ те ăшђикки:
Вут хутсан тĕтĕмпе
Пăсланаťђĕ
Тăмран тунă атте кăмаки.

—„Мĕнле пурвăн, ађам
Мĕнле пурнăн,—
Тĕнђере пурăнма çăмăл мар,
Пурнăçра сахал мар
Хура-шурă,
Ех, ађам, мĕскерле пурăнар!?“

Ун ђухне саккăрта
Пулнă епĕ:

Пурнăç мĕн икенне пĕлеймен,
Аннене лăпланма.
— Ан йĕр... теттĕм,
— Епĕ те етемех пулăп тен.

—Çук çав, çук!
Ыррийех темĕн.,. тетҌĕ
Тĕтĕмрен урайне лăпҌăнса,
Пурăнма йăвăртан
Тек йĕретҌĕ
Пит-куçне тутăрпа хупласа.

АйванҌҌĕ унҌух еп,
АйванҌҌĕ.
Аннен хуйăхне пусарма
Тĕрлĕрен сăмахпа
Йăпататтăм,
Йе йĕреттĕм хам та хурланса.

Кăмăка çулăмпа
Йалкăшсассăн—
Тĕтĕм-сĕрĕм ташлатҌĕ хастар.
Ах, анне, хуйăхна
Тек ан асăн,
КуççулҌне пит çине ан йухтар!
—„Çук, сынна етем пек
Шутламаççĕ,

Чăваш ... КНИЖНАЯ ... г. Чебоксары Чувашской АССР Абонем. ящ. № 25.

Мĕнле пурнăн, аҫам, малашне?“...
Ăнсăртран пĕр ирпе вăл
Сӳнсе ларҫĕ,
Ҫĕре кĕҫĕ тăванăм анне.

* * *

Ҫамрăк вăхăт хăшне
Питĕ ырă,
Ҫамрăк вăхăт—ҫапҫутă хунар:
Пурăнма кĕлетре
Пултăр тырă,—
Вара есĕ телейлĕ хастар!

Ҫуттĕнҫен ҫут лаши
Питĕ шухă,
Сиккипех варкăшать малалла,
Ăнсăртран тăлăха
Тăрса йултăм...
Пурнăҫ, пурнăҫ! Кулать ал ҫапсах.

Ах, мĕскершĕн етем
Вăй-хавалĕ
Пĕр пек мар—тĕтоеллĕ, найан!
Ҫухăна кышлама
Йуратаççĕ,
Ҫухăнах таптасшăн пуйан.

Лапҫăк пӳрт ҫĕр ҫумне
Тайăлса,
Путса анҫĕ кунҫул иртнĕрен.
Шавлаŭ, йăнăшаŭ
Пуш арпалăх,
лашаŭ пит киҫем.

Анҫах, пĕтнĕскер
Хастарлантăм,
Тĕрмене хупăнман, вăрă мар;
Кутамкка йăтрăм та
Тухса карăм
Ҫĕтĕк-ҫатăк хыткан кил-ҫуртран.

Шăхран. Пуйăссем
Мĕкĕреççĕ,
Сивĕ ҫил, еп пырап танкаса:
— У-у-у! аҫам,
Пĕтен есĕ, теççĕ.
Ҫил иртет сăхмана туласа.

Ах, йăвăр ҫăтма ҫук...
Питĕ сивĕ,
Танкăшап, хам пĕлмес
Таçталла...
Анҫах ак револютси килсе ҫитрĕ,
Ҫăмăртарĕ аҫашшăн алла.

* * *

Пурнăçпа кĕрешме
Вăй пухатпăр.
Мĕн тăвас? Мĕне кирлĕ пуйан?
Акă халђ çирĕмрен
Иртсе карăм,
Хапрăкра тĕрмещстĕп пайан.

Пирĕн çар ĕçпеле
Пĕр тăванлă,
Пирĕн çар—кивĕ куншăн тăшман:
Пурпĕрех киввине
Аркататпăр,
Пролеттари—вăл çирĕп йуман.

Мĕне кирлĕ мана
Уйрăм пурлăх?
Манăн тусăм—хастарлă машшин.
Шухăш халĕ пуçра
Çĕнĕ, урăх,
Çирĕпленђĕ кунçул тилхепи.

Пирĕн çар—шĕл кăвар,
Вăл хастарлă,
Пĕр ђĕреллĕ рапођђи çемйи.
Еп рапођђи—
Ĕçпе мухтанатăп,
Еп рапођђи—çĕнĕ пурнăç кађђи!

1928 ç.

## Кулан тӑтӑр айакра,
## Ђухӑн пултӑр Советра.

**(йурӑ)**

Ђухӑнпала вӑтамсем,
Утӑр халӑх пуххине,
Есир, шыҫмак пуйансем,
Ларӑр килтех шӑл йӗрсе.
Кирлӗ мар!

Патша ђухне ђухӑна
Пуйан тытнӑ сӑнђӑрта,
Ӗҫлемесӗр пуйнӑран
Хырӑм пулнӑ мӑн капан,—
Ҫӑхансен!

Револђутси патшана
Тӗппипелех аркатрӗ,
Пире мӗнпур ђухӑна
Пусмӑрлӑхран хӑтарђӗ.
Савӑнар!

Пуп таврашӗ, старшшина
Тек пурнат̆ђӗҫ ахӑрса,
Ерех кӳпнӗ пӗрехмай.
Турри пулнӑ Микулай—
Шампасен!

Кирек ăçта пырсан та
Шав кулакђĕ пуçлăхра,
Саламатпа хĕнесе
„Ĕç“ тăваҭђĕç ун ђухне.
Йаланах.
Çиме çуккă,—Микулай
Сăптăраҭђĕ куланай,
Пайтах ђăтнă хĕнхура
Патша пулнă вăхăтра
Ђухăнсем.
Халĕ ирĕк хамăрта
Пуççапмастпăр пуйана.
Ей, услăмăç, старшшина,—
Çук! Кĕреймĕр Совета.
Тăрăшсан та!
Ђухăн тивĕç ĕçлеме
Йалти халăх хушшинђе,
Пуйансене ни-ни-ни!
Вĕсем патшан йулашки
Йыттисем.
Кулак—пуйан тавраш не
Совет ĕçне парас мар,
Вĕсем пирки ĕлĕк те
Пайтах йухнă пирĕн тар,—
Кирлĕ мар!

Акă çакă ђухăн—Тит
Халăх ĕçне йуратаĭ,
Вăл хастарлă комунист
Ĕçлеме те пултараĭ—
Вăл аван.

Хамăр майлă ђухăна
Суйласассăн шанђăклă,
Пурнăç кайĕ малалла
Çыпăçуллă—ăнăçлă.
Ун пеккине çул парас
Совета!

1928 ç.

---

Чувашская книжная палата
г. Чебоксары Чуваш. АССР
Абонем. ящ. № 25.

## Ирхи шухăшсем.

Ал. Камĕнĕва

Кăвак çути палăрҫĕ,
Авăтат̆ автан,
Ыйăх таçта çухалҫĕ—
Кĕçĕр куç хупман.

Çĕрĕпелех кышлană
К у ш н ĕ р *) çимĕçне,—
Çитесшĕнех çунатпăр
Ăслăллăх вĕçне.

Ех, Рапфакăм—çут хунар,
Йату хурçă сан,
Ăс-тăн илме çăмăл мар,
Çивĕҫ пулмасан.

Хĕлхемленҫĕ йаш ҫĕре,
Шут вĕçет инçе:
Телей курас тĕнҫере
Усăллă ĕçпе.

---

*) Клас кĕрешӳ историйĕ çинҫен çырнă автăрăн хушамаҫĕ.

Вĕренӳ—тĕк вĕренӳ—
Вăл икерҫĕ мар,
Ех, вĕренӳ, сан йату—
Ҫăнах шĕл кăвар!
Ҫĕрĕпелех тăрмашнă
Кĕнеке ҫинҫе,
Ленин панă хаклă ăс
Пуҫăм варринҫех.
Рапфак, рапфак—манпала
Ҫи сывăх тăван,
Ҫавăнпа та ыйăхран
Тăтăм, ҫавăрман.
Ҫăт, ес пуҫăм, ҫăт, ĕҫле!
Лайăх вĕренес.
Ăс-тăн илсен пикенсех
Комуншăн ĕҫлес!

1930 ҫ.

## Комсомолĕс поета

Ĕçпе писнĕ çыннăн
Вăй-халĕ вĕри,
Хăватлă, кăварлă
Ун хурçă ҫĕри.
Çĕн пурнăçшăн вир тĕ
Тăрат̆ вăл хастар,—
Сывă пултăр пирĕн
„Ким" паллиллĕ çар!

* * *

Акă, пăхăр ĕнтĕ
Çакă сăвăçа:
Айванлăхĕ пĕтнĕ—
Ĕçшĕн çапăçат̆.
Ав унăн сассийĕ
Йантрат̆, шăранат̆:
Каҫҫине, хĕрне те
Ĕçе йыхăрат̆.
Йантратăр, шăрантăр
Ĕçхалăх йурри!
Пăҫлантăр, тĕп пултăр

Пупсенĕн тӳрри!
Сăвăç ăсĕ çивĕђ,
Ђĕлхи унăн—хĕç,
Хĕрлĕ йалав илђĕ...
Ёç йуррийĕ вĕç!
Ваçанкка йулташăм,
Мĕскер-ши калан?
Епĕ те кумасшăн
Сăвă санпала.
Тĕтреллĕ кив пурнăç
Çухалтăр умран,
Комсомол пилеђĕ
Пайан ман çумра!
Шăран, çĕнĕ йурă,
Çĕклен, есĕ, сас!
Иртсе карĕ хурлăх—
Мĕншĕн пуç усас?
Пирĕн çар хĕрӳллĕ,
Ленинпа епир...
„Комсомол“ йат çӳллĕ,
Уншăн тăтăм ир!
Йантратăр, шăрантăр,
Комсомол йурри!
Путлантăр, тĕп пултăр
Пупсенĕн турри.

Чувашская Книжная Палата
Чебоксары Чувашской АССР
Обяз. экз. № 25.

Комсомолăм манăн
Çивĕç те хастар,
Сывă пултăр савнă
„Ким“ паллилле çар!

1926 ç

---

## Кивĕ пурнăç маншăн йут.

Пурнăç тумĕ—
Анлă Атăл;
Хурлăх кунĕ—
Çĕр, ес, ватăл!
Çамрăк пуçăм,
Йаш ҫĕре
Хĕртĕр, çунтăр
Çак ĕçре!
Çамрăк вăхăт—
Вут-хĕлхемлĕ,
Çĕнĕ кун ун—
Ҫыс емелĕ,
Хĕртĕр çирĕп
Çĕнĕ шут,—
Кивĕ пурнăç
Маншăн йут!

Ĕлĕк епĕр
Куççулъ витĕр
Аран-аран
Ђун усранă:

Çиме çукшăн
Çĕтĕк тумшăн
Пайтах кӳтсе
Йĕрсе ларнă.

Пуп таврашĕ!
Йыттурташшĕ:
Пыл-çу çинђех
Йарăнаттђĕ.

Ĕçлемесĕр
Темиçе çĕр
Укçа-тенкĕ
Сăптăраттђĕ!

Вилме маннă
Йал пуйанĕ
Пурăнаттђĕ
Питĕ ырă;

Ампарта та,
Кĕлетре те
Тулса тăнă
Упăн тырă.

Ђухăн кăна
Выçă хăна
Çут тĕнђешĕн
Унђух пулнă.

—„Есĕ—кĕлмĕç...
Сана мĕн ĕç“,
Тесе пиртен
Унђух кулнă.

Вăл кун халĕ
Иртсе карĕ,
Пуп вăй-халĕ
Тин хавшарĕ:

Ĕçлĕ халăх—
Асăнмалăх:
Вăрăм çӳçе
Хăй лăкарĕ!

Халĕ ђăн та
Пурнăç урăх,
Мура кайтăр
„Вилнĕ сурăх;“

Харампыра
Çапса хуçнă,
Тин сывларĕ
Ђухăн уççăн!

Ҫăн̈сассийĕ те
Шăпланҫĕ,
Хĕрессийĕ
Персе анҫĕ;

Раскулаҫҫĕт
„Турра" тунă:
Ёмĕр иртрĕ
Ёнтĕ унăн.

Суйа ҫуртăн
Кунĕ иртрĕ,
„Тура- ҫуртăн"
Шăмми витĕр:

Сухăр вĕлтрен
Шăтса тухрĕ,
Пуп шампийĕ
Ҫĕрсе йухрĕ.

Ăҫтăн халĕ
Пуҫа усăн?
Тăван йалăн
Тăхăр пусă;

Ушкăнланнă
Ҫĕршер кил,—
Кивĕ пурнăҫ!
Ҫĕр, ес, вил.

Хапрăк-савăт
Кур-ха, авă,
Темĕн ђухлĕ
Шăтса ларнă.

Тĕрлĕ машшин
Çуратаççĕ,
Çĕнĕ йалшăн
Тăрăшаççĕ.

Çĕнĕ пурнăç—
Пит те селĕм,—
Сывă пултăр
Хурçă Сталĕн!

Хĕртĕр çирĕп
Çĕнĕ шут,—
Кивĕ пурнăç
Маншăн йут!

1930 ç.

## КЕЛИ КЁРНУРИНЕ.

Ђĕре çунат̆ пайан
Мăнтарăн,
Çухалђĕ хаклă тусăм ман.
Ех, Кели, Кели!
Вилсе карăн,
Кунçул пит хăвăрт иртрĕ сан.
Нумай пулмаст̆
Çыру тĕрлерĕн,
Ăс-тăн параттăн тек мана:
—Аттай, епир—
Çĕн çулшăн, терĕн...
—Умра Илйиђлă самана.
Кĕрлет мĕлйунлă
Ĕçлĕ сасă
Халђ хапрăк—савăт ăшĕнђе,
Ĕçпе пĕрле йулташ
Пулсассăн!
Ђăнах илемлĕçке тĕнђе!
Анђах, етемĕн
Кунĕ-çулĕ
Илемлĕ сывлăш пулсан çеç:

Ех, Кришшă, Кришшă!
Сӳнсе лартăн,
Ҫаххуткă ҫирĕ ҫеҫеке.
Ĕҫхалăх ирĕкшĕн
Тăраттăн,
Ĕҫе мухтаттăн сăввунта.
Мĕскер-ха тăвăн—
Тӳнсе антăн,
Ҫуххуткă ҫирĕ ҫамрăклах,
Поет тени кĕтӳпе
Пирĕн...
Хăшсем вĕҫеҫҫĕ шутсăрах:
—„Еп кам!? Ман пек.
Мухтавлă лирĕк—
Ҫăвашăн ҫук-ха, ăс сăра!..“
Питне-куҫне
Ҫухатнă анҫăк
Сикет манерсĕр ҫăлт-та ҫалт.
Упек етем,
Унпек мухтанҫăк
Мĕн усă парĕ ҫĕршыва!?
Нумай пулмасӗ
Тепри найларĕ,
Куласшăн „гений“ кассăн-кас:
—„Шалттай-палттай“...

Ну мĕн кăларăн?
Кунпа мана
„Йеруй“ Йанкас!?
„Шалттай-палттай“
Етем пулмашкăн
Тупмарăм вăхăт епĕ--Марк.
Йаңкас! Унпек текех
Ан ашкăн;
Йерçместĕп. Ғаt! ан ђăрмантар.
Вĕçмесп хампа.
Ђăн, кĕлмĕç пулнă:
Кăшт çеç хăрмарĕ ку тымар.
Пайтах патша ђух
Пиртен кулнă.
Атте анне те кулак мар!
Хура пӳртре хĕнхурлă
Ӳснĕ,
Çавах хăрмарĕ ку тымар.
Пайтах тăварлă
Мăшкăл тӳснĕ;
Епир—кулак тавраш мар!
Шалттай-палттай
Етем пулмашкăн
Йерçу тупаймăн Рапфакра.

Ғаt—пушă çын.

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Асовем яш. № 25.

Йанкас! текех унпек
Ан ашкăн,
Йерçместĕп, çук ан ђăрмантар!..
Ăшђик çунаť пайан
Мăнтарăн,
Çухалђĕ хаклă тусăм ман;
Ех, Кели-Кели!
Вилсе карăн,
Ђаххуткă çирĕ çамрăклах!
Ĕçхалăх ирĕкшĕн
Тăраттăн,
Ĕçе мухтаттăн сăввунта.
Кулаксене ес
Хăтăраттăн
Кăварлă, вирлĕ статйунта.
Хĕрӳллĕ сăвăç
Пур-ха пирĕн—
Елкер тĕреклĕ вăйлă халђ,
Кулаксене çапаť вăл
Вирлĕ,
Анђах... унпек поет сахал.
Краснов—Асли те
Ĕçлет çивĕђ
Ĕçлех, йулташăм, йара пар.
Сан пек çынна

Хаклатпăр—тивĕç;
Шупуç „Йеркĕн" пек çĕрĕк мар.
Хутар—Толковиђ
Ĕççынnишĕн
Тăраť-ха çирĕппĕн, патмар,
Маркçисла криттĕк
Пире кирлĕ,
Пушпарапансем кирлĕ мар!
Патман „Воплийĕ"
Аса килђĕ,
Тути мĕнле-ши ун пуллин?
Пĕркун йулташ
„Çелоткă" илђĕ —
Пит шăршлă пулђĕ йалкулли!
Тăван çыруллăх
Çитĕнет-ха,
Çыруллăх штапĕ вăйсăр мар!
Анђах, ес Кели,
Сÿнсе лартăн:
Ђаххуткă çирĕ çамрăклах.
Çыруллăх йĕрĕшĕн
Çунаттăн,
Çухалтăн шуçăм çуталсан
Пайтах мана ес
Ăс-тăн патăн;

Кун-çул пит хăвăрт иртрĕ сан.
Йантрать мĕлкунлă
Ĕçлĕ сасă
Хаљ хáпрăк-савăт ашĕнђе,
Ăна илтеймĕн тек,
Йулташăм,
Санран çухалђĕ çут тĕнђе.
Пурпĕр ађа пек
Йĕрсе лармăп—
Келийĕн ĕçĕ вилес çук;
Тăван çĕр шывшăн
Вăй пухатăп,
Ĕçлес çĕн пурнăç ўснĕ ђух.
Мана каларăн,
Есĕ Кели,—
—„Кăклар киревсĕр кулака!“
Пуйансене тĕппех
Ишмеллĕх
Вăй-хал пухатăп Рапфакра.
Кулаксенђен текех
Кам хăрĕ?!
Путланђĕ пăнтăхнă тĕнђе,
Илйиђ çул-йĕршĕн
Çирĕп тăрăп
Умри кунçулăм тăршшĕнђе!

1932 ç.

## Ĕҫхĕрарăмне.

Тыткáнра пиҫĕхсе
Ҫуннă арăм,
Сахал мар ҫăтрăн ес хĕнхура.
Ĕмĕрте савăнса
Кураймарăн
Ĕлĕкхи, тĕрме пек, пурнăҫра.
Мĕнпур пек мăшкăла
Хуйăх витĕр
Шав кышланă „ҫуну" тухнҫҫен,
—Ах, хăҫан ман умран
Хурлăх пĕтĕ?
Тарăхаттăн хуна ҫиллеисе
—„Мĕн тума тĕнҫене
Еп ҫуралнă?
Йе ытла ҫылăха кĕтĕмши?"
Аптраса „турруна"
Пуҫҫапаттăн
Ҫĕрере‌н йăлăнсах ҫáв тери.
Анҫах ҫук, пурпĕрех
Хурлăх кунĕ.

Куранмарĕ унҫух улшăну.
Тапкăпа, ҫупкăпа
Есĕ тусҫĕ,—
Пурпĕрех хĕрхенмест упăшку!
Акă ҫитрĕ аран саншăн
Хаклă—
Револуутси,—вунҫиҫҫĕмĕш ҫул,
Октапĕр сана ирĕк паҫĕ.
Ленин илҫĕ сăмах, калаҫу:
**Вся власть—Советам!**
Илтетни?
Йантăрарĕ, кĕрлерĕ тĕнҫе.
Патша ăмăрткайăкĕ
Ванҫĕ —
Рапоҫҫи Илйиҫ патĕнҫе.
Октапĕр хайаррăн
Йантрарĕ,
Аркатрĕ асаплă куна.
Мĕнпур ĕҫҫыннийĕ каларĕ:
—Саватпăр кунпек саккуна!
Сан умра ак пайан
Пурпăҫ ҫĕнĕ.
Мăшкăл иртрĕ тинех умăнтан:
Хĕпĕрте кунҫулу
Ҫĕкленнишĕн,

Хăт арçын, хăт арăм
Халĕ тан!
Йантăрат савăнса
Çĕнĕ йурă,
Совета ытала тăр ђĕре:
Мĕне кирлĕ пайап
Суйа турă?
Кирлĕ мар суйа çут тĕнђере!
Упăшку тек сана
Хĕсĕрлеймĕ,
Мăшкăл иртрĕ тинех умăнтан,
Тинех çитрĕ ес кĕтнĕ
Телейлĕх.
Хăт арçын, хăт
Хĕрарăм—
Халĕ тан!

1928 ç.

## Суйлав йурри.

Вунвиçĕ çул пурăнатпăр
Совет влаçĕ хӳттинђе—
Çитĕнӳшĕн йанăратăр
Çакă йурă йал çинђе.

Кивĕ пурнăç пит тискерђђĕ—
Тем пек асрĕ Микулай:
Ђухăнсенне тир сĕветђĕ,
Сăптăрайђĕ куланай.

Тӳлеме вăй çук пулсассăн
Хурлăх тӳснĕ ђухăна
„Хĕрхенетђĕ“ кассăн-кассăн
Тапкăпа та çупкăпа.

Унђух епĕр ђухăн пирки
Шав кышланă хĕнхура,
Çавăнпа та куççуљ витĕр
Тăснă хурлăхлă йурра.

Вăл кун халĕ иртсе карĕ,
Аркатрăмăр пуршуйа
Унпăн кам куççуљ йухтарĕ—
Ан кĕрле, шыçмак пуйан!

Совет влаçĕ ирĕк пађĕ
Мĕнпур ђухăн халăха,
Хĕнхур сăннинђен хăтарђĕ —
Мухтав çирĕп Совета!

Ђăн-ђăнах çĕршыв çĕклеђђĕ,
Ирĕк хамăр алăра.
Çавăнпа та ђĕтрететпĕр
Тĕвђери пур пуршуйа.

Пайан ав Совет суйлатпăр.
Пултаратпăр ĕç тума,
Çитменлĕхе путаратпăр,
Путаратпăрах ăна.

Пуçана, кумма-таврашĕ
Советра вăл кирлĕ мар,
Сăмах пур ман улт-çиђ аршăн —
Суйлав пуçлăх ирĕк пар.

Акă çак Маçак Макарĕ
Совета кĕресшĕн хаљ,
Пуйансемпĕн пуçне парĕ —
Кирлĕ мар уншек наххал!

Тĕшмĕш Çитăрăн Ђавукĕ
Кулаксене сутăннă,
Унтан усă пулас çук —
Пуç мимийĕ пăсăлнă!

Чуваш... ая
Книжная палата
Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. экз. № 25.

Акă ку ђиркў тарçиййĕ—
Ăсран катăк çын, Сахар,
Вăл пупсемшĕн çын та çиййĕ—
Совета вăл кирлĕ мар!

Колхоса савмасăр пĕлтĕр
Çакă мăн тута Тарйа,
Тăхăр сурăх пусса çинĕ
Шампахырăм пĕр каçра!

Михвуте тата кам пĕлмĕ,
Вăл растратђĕк, нўхрепкуç:
Йалта спорщђĕк пулнă майĕ
Укçа ђикрĕ тўђ-те тўђ!

Пуп тавраш кулак тарçиййĕ—
Советра вăл кирлĕ мар,
Пролеттари инттересшĕн
Тăракана çул пăрар.

Акă çак кĕтўç Иванĕ
Ђăн активлă комунис,
Вăл пулсассăн ĕç вăйланĕ
Совета суйлатпăр, Bis!

Йаштак Пĕтĕр Натилин те
Ĕçлемешкĕн вăйĕ пур,
Вăл патрађкă,—хаçат тусĕ,
Ĕçлĕ лайăх пăх тă кур!

Сымук пиҫи колхос апшĕ,
Халăх ĕҫшĕн тăрăшаӳ.
Комунис вăл, Совет влаҫшĕн
Мĕнпур вăйранах тăраӳ.

Пуп тавраш кулак тарҫийĕ
Советра вăл кирлĕ мар,
Совет влаҫшĕн тăракана
Ҫакă ĕҫе ҫул парар!

1930 ҫ.

---

## Колхоҫнĕк йурри.

**Сымук Санҫкнина.**

Колхос уйĕ—аслă хир,
Пĕр йенҫе вăрман;
Пит илемлĕ ҫакă ир,
Вăй ҫĕкленҫĕ ман.
Таҫта ҫӳлте, пĕлĕтре,
Кĕвĕлет тăри.
Ха, ăҫта вăл, хăш тĕлте?
Есир куртăр-и?
Тăри-тăри!-и Тăр-тăр-тăр!
Савăнса кайан.

Ҫуракине тухрăмăр
Пĕрлешсе пайан!
Пĕрлешӳллĕ вăйпала
Ĕҫ йухаў шыв пек,
Хăў мана ес тем кала,
Найанланмăп тек.
Ей, улайккă, лаша тус,
Хăвăртрах ĕҫлес:
Сĕлĕ ҫинĕ, пуҫ ан ус!
Утарнĕк, вĕт, ес.
Сĕнĕ пурнăҫ шыв пекех
Шăвăнаў мала,
Трактăр трактăрђ кĕрлесе
Ҫитĕ кĕҫ йала,
Унђух ҫакă акара
Тар-шыв йухмĕ сан,
Ах, аванђђĕ Макара,
Вăл кунта пулсан!
Ну, улайккă, лаша тус,
Васкасах ĕҫлес,
Сĕлĕ ҫинĕ, пуҫ ан ус!
Айван мар, вĕт, ес!
Тамăкри пек йывăр куя
Йулђĕ хыҫала,

Ĕмĕр иртрĕ ĕнтĕ ун
  К ђорту! унпа ла.
Ĕлĕк ђăтрăмăр хĕнхур,—
  Ђĕре варринђех,
Ђут вилеттĕм пăх та кур
  Хам та пĕринђе.
Ей, улайккă, лаша тус,
  Хыпăнса ĕçлес,
Илукă çĕнĕ, пуç ан ус,—
  Тутă халĕ ес.
Пайтах кулђĕ ĕлĕк ђух
  Манран çуттĕнђе.
Асаплантăм ырлăх çук
  Пуйан патĕнђе.
Акă халĕ пурăнма
  Колхосра аван,
Çĕнĕ пурнăç хам умра—
  Ђун çĕкленђе ман.
Колхос уйĕ—аслă хир,
  Пĕр йенђе вăрман.
Пит илемлĕ çакă ир,
  Вăй çĕкленђĕ ман.
Тамăкри пек йывăр кун
  Йулђĕ хыçала,
Ĕмĕр иртрĕ ĕнтĕ ун—
  Вĕçер малаллах.

1931 ç.

# Йĕплĕ сăвăсемпе такмаксем.

*
* *

Урам тăрăх пынă ҫух
Куштан йытă куртăмăр,—
Унтан усси пулас ҫук,
Ҫапрăмăр та утрăмăр!

Йĕплĕ хулă туйана
Хуран айне хутăмăр,—
Урса кайнă кулака
Раскулаҫҫĕт турăмăр.

Тӳнкки-тӳнкки параппан
Ҫапмассерен тӳнлетет,—
Арентаттăр Митраппан
Патша влаҫне пит кĕтет.

Кикирикик сар автан
Мăйне тăснă—какаклаҫ,
Темҫул мăйне тăссассăн та
Вăл ҫăмарта тăвас ҫук!

Пуйэн, ҫейс Митраппан
Колхос майлӑ йумахлат̆,
Темҫул ҫуллӑ калаҫсан та
Вӑл колхосра пулас ҫук!

Раскулаҫҫӗт тунӑ майӗ
Кипшал йӑтрӗ Тимухха,
Пурӗпӗрех хӑратаймӗ:
Шӑлӗ ӳкнӗ ха-ха-ха!

Нӑрттин-нӑрттин кӑвакал
Кутӑн-пуҫӑн ҫӑмкалат̆,—
Паҫӑшкӑпа Митраппан
Пайтах хӗсрӗҫӗ йала.

Хааҫ! сволӑҫ, мур сысни
Кӗлет айне тарнӑ,—
Митраппанпа Варлампийе
Сасӑсӑр хӑварнӑ.

Ай-ву! Темесен—
Ӑҫтан пулӗ пархатар?..
Урса кайнӑ кулаксене
Тымарӗпех аркатар!

1930 ҫ.

---

## Такмаксем.

Йӑван Ваҫҫилӗ шыҫмакланӗҫӗ,
Ҫӳрет питӗ капӑр,
Растраттӑпа лапки шанӗҫӗ—
Сутпа ӑна тапӑр!

Манӑн шӑллӑм Мӗкӗте
Калама ҫук паттӑр:
Икӗ ӗыхвӑр шӑп пӗлет,—
Пулӗ копператтӑр!

Уй-хир тӑрӑх ҫил ӗупаӑ те—
Енкасри пуп тыр пухаӑ,
Хӑш-пӗр хвершш'л куҫӗсенӗен
Кунӗн-ҫӗрӗн пӳр йухаӑ! —

Сопак Куҫми арӑмне
Шаккана га—вилнӗ,
Вӑл хӑй ӑна ӗӗререн
Савни тесе илнӗ.

Йалта колхос тунӑ ӗух
Макар шартах сикпӗ,
Еккей, пулаӑ ӗӑхӑ ӗун—
Тӗп сакайне сикнӗ.

Уçтен инкен пуç мими
Таçта тухса тарнă?
Çу купĕнҫех ампарне
Пăснă та çунтарнă!

Айван мулкаҫ шăтăкран
Таçта мура тарҫĕ?
Уçтен инке ăс çукран
Йал-йыша култарҫĕ.

Пирĕн колхăс çыруçи
Выкăвăр туйаннă.
Поттому штă тыррине
Уйрах çĕртсе йанă!

Айван кăрккан çунатти
Çăмăрпа йĕпеннĕ,
Çеклеттере колхосран
Ай-йуй йăтса пенĕ!

Малти касри комсомолсем
Кăмăла кайаççĕ,
Йурататăп вĕсене—
Ай каҫҫа кайасҫĕ!

Мĕне кирлĕ тек мана
Пуйан—„ҫаплă" йашă?
Халĕ çĕнĕ самана—
Сывă пултăр Сашшă!

Манăн сăвни комсомол
Ĕçре вăл пит паттăр.
Иксĕмĕрте колхосра
Хӳхĕм пурăнатпăр.

Пуйан вђи Мĕкĕте
Хăй матки тăвасшăн.
Кирлĕ мар вăл упăте
Сывă пултăр Сашшă!

1929 ç.

---

## Карт ăстисене.

Майĕпелех хăш-пĕрисем
„Ĕçлеççĕ аван“,
Каç пулсассăн, вăртăн çĕрте,—
Ођколла йалăн.
Улттăн-çичђĕн пухăнсассăн,
Ођко ахăраť,
Унта кĕрлет тĕрлĕ сасă.
Хытă йантăраť.
Хастарланса, хавасланса
Выљатаççĕ карт.
Çав вăхăтрах, шăртлансассăн,
Вăрçă пуçăнаť.

Ак пăхăр-ха выљакансем
Лашисене сутнă,
Май килмесĕр шереметсем
Перепорне тунă.
Тарăхсассăн кассăн-кассăн
Пурте харкашаççĕ,
Йанăхран та, хăлхаран та
Ђышкăпа параççĕ!..
Карт ăстисем, хăйаматсем,
Выљăр кáртла, выљăр!
Укçа пĕтсен выљамашкăн
Çуртсене те сутăр.
Унпек „лайăх, ђаплă вăйă“
Урăх ăçтан пултăр?
Пурпеккине сутса йарсан,—
Ђăх та сиртен култăр!

1926 ç.

---

## Михалкка.

Пасар варинҫе пĕр лапка,
Пĕр лапка,
Услам тăваŤ Михалкка,
Михалкка.
Куҫĕ-пуҫĕ витĕр мар,
Витĕр мар,
Ех, кайанни, мĕскĕн ар,
Мĕскĕн ар!
Еккей, пулаŤ тăм ҫамка,
Тăм ҫамка,
Шăнса кайнă аҫампа,
Аҫампа.
Тăпăрт-тăпăрт! Сиккелет,
Сиккелет:
— Ман тавара кам илет?
Текелет.
Шăршлă пулă пĕр катка
Лапкара,
Ху-у-ути! ҪураŤ сăмсана,
Сăмсана.

Акӑ пытҫӗ пӗр мушик,
Пӗр мушик:
— Санӑн пулӑ пурҫҫӗ-ши?
Пурҫҫӗ-ши?
Пулӑ илес тетӗп-ҫке,
Тетӗп-ҫке,
Куҫ виттӗрех курмаст̆ те,
Курмаст̆ те...
— Е-е-е, килех, пошалттӗ,
Пошалттӗ,
А, ну, ҫово скашӗттӗ?
Скашӗттӗ?
— Пулӑ пур-и тетӗп-ҫке,
Тетӗп-ҫке,
Куҫ витӗрех курмаст̆-те,
Курмаст̆-те!
— Ара-ара, пур-пур-пур!
Пур-пур-пур!
Питӗ ҫвеши пӑх-та кур!
Тытса кур!
— Мӗн хак тӑрат̆ кӗренки,
Ну, кала,
Ҫийес килет ҫав тери,
Михала!
— Йӳнӗ-йӳнӗ! Хаклӑ тус,

Савнӑ тус,
Кӗренкийӗ ҫитмӗл пус,
Ҫитмӗл пус!
Илех, тусӑмҫӑм, Тарас,
Ну, Тарас,
Тавай, штолӗ --турттарас?
Турттарас!
— Тавай, турттар ҫурӑ пӑт,
Ҫурӑ пӑт,
Пулӑ лайӑх тетӗн тӑк,
Тетӗн-тӑк!.
Акӑ йепле Михалкка,
Михалкка,
Тултарать вӑл услама,
Услама!
Ей, Михалкка! Михалкка!
Михалкка!
Тӑпру ҫӑмӑл пултӑр сан
Виҫ кунтан!

1927 ҫ.

## Тӑнсӑр слушӑшҍи.

Слушӑшҍисем хушшинҍе
упӑтесем сахал мар.
Йӑван Муҍи сӑмахӗнҍен.

Страствуй, ты мой трук Раман,
Раскашу вам новӑҫ,
Корӗ витӗ польшой ман—
Ӗҫлес килмест вовҫӗ.

Так напраснӑ, ҍорт воҫми,
Ӗнер киле карӑм...
Раҫвӗ мошнӑ шанма им—
С ума сошшол арӑм.

Йа старайуҫ са колхос,
Суймастӑп йейпоху,
А ман арӑм овйосз
Протала торковтсу.

Колхос ӳснӗ вӑхӑтра
Ман шена ӑсланнӑ,
Несҍастни пӗр сурӑха
Пусса ҫисе йанӑ.

Урăх выђăх-ђĕрлĕх çук—
Пĕр кушак çеç йулнă.
Вăл та шăши тытнă ђух
Простутитсă пулнă.

Лошшăй пыла у међа,
Ăна та ђорт сутнă,
Корппо сволăђ тђа маххан
Илсе кайса пуснă.

Вот ктс шивут тиккари,
Ойой, ты мой пошĕ!
Çелсоветски çекреттар
Хуликанĕт тошĕ.

Втрук встреттилçа урамра
Сам çекреттар пйаннăй,
Неђђенсурни йурăна
Во вçу ђăсса йанă.

Как увитал вăл мана—
Срасу ђулпа пеђĕ,
Аран-аран упешал
Ђуй-ђуй-ђуй ленкеђђĕ!

Йешĕл-пы ес упта пыл—
Вилен, ђесни словă,
Калама ђуй не сапыл
Ĕçеççĕ пий ловккă.

Хŏттă не вçех теревнђах
Çынсем уппек çвери,
Понимайĕш, лошшăт ман
Пулса хăла мерин.

Текех йала хŏттă реш
Нисашто каймастăп,
Йа слушăпгђи ђеловек
Не тђа йал пурнатăп.

Унта кайсан так и снай—
Ђунсăр йулма пулĕ,
Айта, пойтŏм пивнойа,
С корĕ выпйĕм штолĕ!

1930 ç.

---

## Самокриттĕк такмакĕсем.

(„Касаҫҫок“ кĕввипе).

Совет влаçĕ тĕттĕмлĕхпе
Мĕн пур вăйран çапăçать,
Утăр-ха, теть—малалла.
Çутта тухма йыхăрать.

Ех, хăш-пĕр йалсенҫе
Пуçăнҫĕçĕ çутăлма,
Мушиксенĕн çуттисем—
Ҫетвĕртпе те лакăмпа!

Ҫухăнсене пулăшмашкăн
Пулăшкомсем кирлĕ çав,
Пурнăç çулне йусамашкăн
Ĕçлес пулать вирлĕрех.

Хăш-пĕр çĕрти пулăшкомсем
Пултараççĕ пулмалла!
Ҫухăн ваҫҫи пулăшува
Атрĕслеççĕ пуйана.

Усламăçа пуйтармашкăн
Текех епĕр тăнсăр мар,
Копператтив уçăпăр та
Йӳне ӳкĕ шалавар.

Хамăр йалти лапкара
Шутсăр хĕпĕртерĕмĕр:
Шăлапирле çытаксене
Ђевонтсăпах илетпĕр!

Пођтăсем те тăрăшсассăн
Ĕç вăйланĕ малалла,
Хаçатсем те пит вăхăтра
Сарăлĕçĕ йалалла.

Ех! Пођтă лашисем
Çил-тăвăл пек вĕçеççĕ:
Виç кун кайас çырусем
Уйăхранах çитеççĕ.

Хăш-пĕр „ăслă" хĕр-упраçăн
Асĕ кашнин виç хăлаç,
Пуçăнђĕçĕ вĕренме
Текех лармĕç тĕттĕмре.

Ех! Хăш-пĕр „ăслисем"
Çутта тухса карĕçĕ,
Вунпиллĕке çитсенех
Папак тума вĕренђĕç.

Тухтăр тенĕ стемсем те
Ĕçлесессĕн тăрăшса—
Ђир-ђĕрсемте тек çÿреймĕç
Хÿресене тăратса.

Хăш-пĕр „тăнлă“ тухтăрсем
Тăрăшаççĕ как калас:
Кăшт саккускă памясассăн
„К ђорту!“ „теççĕ,—ан калаç!“

Самокриттĕк алăккине
Ђари уçса йарар-и?
Кахалланнă ђинавнике
Вĕри кукăљ парар-и?

Хайт! Тва! Темесеп
Ăçтан пулĕ пархатар?—
Самокриттĕк а́ллипеле
Çитменлĕхе аркатар!

1927 ç.

## Конешнă!

Макар çпата тăвать тет,
Пăхать тет те макрать тет.
„Тилей ăçта ес карăн?“
Ђунĕ кӳтнĕ Макарăн.
Конешнă!

Йалта колхос çитĕнет,
Макар унта кĕмен тет.
Унпа лаши Макара
Шарррт! Тапнă тет акара.
Конешнă!

Сылтăм алли аманнă.
Макар ĕçе йăлт маннă.
„Мĕн латти,“ тет,—ехахай.
Çпата хуçнă сулахай.
Конешнă!

Çпати çине пăхать тет,
Пăхать тет те макрать тет.
Тарăхнипе хайхискер
Пăхкалать тет пит тискер.
Конешнă!

Карђӑккине тытрӗ, тет.
Кӑррррст! ђарараn ђышрӗ, тет.
— Мӗншӗн кӗтӗн ман пата?—
Сулахай пулђӗ ҫӑпата.
Конешнӑ!

Сан пирки вӑл шутласа...
Ес кӗресшӗн калхуса,
Каккуй карђӑк ес,—шуйтан
Тек калхусшӑн ҫуйӑхан.
Конешнӑ!

Хӑй те ҫурӑл, еп кӗмесп.
Еп кам?—Макар! Ма ӗҫлес?
Йуратмастӑп еп ӗҫе
Есех кӗр унта вӗҫсе.
Конешнӑ!

Хайхи карђӑк ват аки
Ответлерӗ Пӑлаки:
— Тунката ес, татӑк ал!
Калхусра хаљ пӗтӗм йал.
Конешнӑ!

Ӗҫрен есӗ хӑратӑн,
Пӳртре вӑрҫса ларатӑн,
Сутса йатӑн кӗрӗке,
Илсе ӗҫрӗп ереке.
Конешнӑ!

Тăну пĕтрĕ, ахтп мур!
Сан пек ухмах ăҫта пур?
Хăлтăр-халтăр санăн ҫурт.
Каккуй арҫын есĕ,—ђурт.
Конешнă!

Тăнран тухса ес тартăн:
Пӳрте пăсса ҫунтартăн.
Мĕн латти-ха ку ара?—
Хәђ пурнатпăр мунђара.
Конешнă!

Ҫпата тума пĕлместĕн,
Кунĕн ҫĕрĕн ĕҫетĕн.
Кирлĕ мар тек ее мана,
Татăк эллă тăмана.
Конешнă!

Макар ђĕри кӳгрĕ тет,
Карђăккине калаť тет:
— Ахти, тăнсăр ахти пйус!
Поккашу сана калхус.
Конешнă!

Пускай сутап кĕрĕке,
Пурĕпĕр ĕҫеп ереке.
Ăҫтан мана ес ђаран?
Вилеп ҫакă мунђарах.
Конешнă!

Чувашская
Книжная палата
г. Чебоксары Чувашской АССР
Архивн. экз. № 25

Сывă пултăр мунҫа ман!
Еп калхусшăн ҫуралман.
Мĕн тăратăн нуҫ усса?
Шалиш! Кĕмес калхуса.
Конешнă!

Хайхи карҫăк уйрăлса
Вĕҫтерҫĕ тет калхуса.
Пурăнаť тет пит аван,
Макар кăна пит айван.
Конешнă!

Колхос ӳсет пăх та кур,
Тем тесессĕн тем те пур.
Ҫуртсем лартса тултарнă.
Пурте ĕҫре утарнĕк.
Конешнă!

Макар пуҫĕ арпа мар:
Сутса ĕҫнĕ шалавар.
Ăҫтан ăна ес ҫаран?—
Вилсе выртрĕ мунҫарах.—
Конешнă!

1932 ç.

## Йăкăнат хуйхи.

Ей, Караҫăм,
Тыт-ха ҫăм,.
Ăс сăра.
Хуйхă куртăм
Пăх-та кур—
Шутсăрах.
Пĕркун цирĕн
Пулҫĕ вирлĕ
Пĕр хĕнхур.
Ăшăм ҫунҫĕ,
Хуйхă тулҫĕ
Пăх-та кур!
Ҫунăм савнă
Хаклă арăм
Кĕтерин,—
Тулли майĕ
Йăвăрланҫĕ
Ҫав тери.
Еккей, тетĕп,—
Ку ĕҫ пысăк,

Шуткă мар,
Ҫĕнтĕм килтĕм
Ватă карҫăк,
Муҫавар.
— Мукҫа хут-ха,
Ҫасрах есĕ,
Митраппан,—
Ăс-тăн паҫĕ
Питĕ „лайăх"
Карҫăк ман.
Йăпăр-йапăр
Кайса хутрăм
Хайхине,
Темĕн ҫухлĕ
Вăл кун утрăм
Шеремет.
Акă епĕр
Карҫăкпала
Мунҫара.
Кĕтернене
Сыватасшăн
Хăвăртрах.
— Ах, вилетĕп!
Питĕ йывăр,
Йăкăнат.

Шалккă питĕ—
Арăм манăн
Йăнăшать.
Хайхи манăн
„Ăслă-тăнлă“
Муҫавар
— Лапка тăрнҫен
Сиктерер, тет—
Арăма.
— Ну-кă, арăм,
Йăпăр-йапăр
Сик ҫĕре,
Итлемесен—
Вилсе кайăн
Кĕҫĕрех!
Тӳп! сикрĕ
Кĕтерне ман
Ҫĕрелле,
Вилҫĕ карĕ—
Мĕскер тăвăн
Шеремет.
Ҫутăлтартăм
Муҫавара
Ҫупкăпа,
— Есĕ тăшман

Вĕлерттертĕн
Арăма!..
Ђунăм савнă
Арăм пурђђĕ—
Пулђĕ çук:
Вилсе карĕ
Тăхăр уйăх
Тулнă ђух.
Ухмах пултăм
Калама çук—
Ăш вăркаĭ,
Илсе кайма
Пĕлеймерĕм
Тухтăра!
Ей, Карађăм,
Тыт-ха ђăм,
Ăс сăра.
Хуйхă куртăм
Пăх-та кур—
Шутсăрах!

1929 ç.

Муђавар—впи карђăк, папăшкă.

# Хĕрлĕ парттисан.

## (П о е м ă).

I

Ташласа йухакан
Çавал шывĕ,
Çĕлен пек, шăвăнаҫ Атăла,
Хĕррипе ҫӳхенет
Тĕрлĕ йывăç,
Сăн-сăпаҫĕ кăвак та хăла.
Çавал ик йенĕпе
Аслă улăх,
Улăхра ҫаплах мар ĭпĕҫĕк йал.
Сахал мар Çавалта
Шĕшлĕ пулă,
Шампасем те асатҫĕç авал.
Çыннисем ĕрҫесе
Пынă майĕ
Тимкассин шутланаҫ хаҫ çĕр кил.
Сахал мар ĕмĕрте
Мăшкăл иртрĕ,
Вулакан, ес ăна аса ил.

Пуйансем пурăнатҫĕç
Пит ырă,
Аванах астăватпăр ăна;
Сахал мар ĕçрĕ йун
Шампа хырăм,
Кўлсе ҫупрĕ пуйан ҫухăна!
Пурнăçпа кĕрешсе
Çапăçатпăр,—
Ҫăтма çук мăшкăла аракатар.
Хĕнхура йаланах
Ылханатпăр,—
Лайăхрах кунçула ыталар.
Иртнине куç умне
Тăратсассăн.
Хал çитмест вĕсене паллама;
Пурнăçра ку таран
Тем те пулнă...
Макçăмпа паллашар малалла.

* * *

Çĕрле.
Пĕлĕте шантал çутнă.
Çĕр çинҫе пĕтĕмпех çĕн илем,
Хĕвел çук. Вăл канма
Куçне хупнă,—
Тосорта уйăхпа çăлтăрсем.

Тимкасси çыннисем
Сывăраççĕ:
Вилнĕ пек ним пĕлми ăйхăра.
Такамсем шутсăрах
Хĕсĕрлеççĕ—
Çил йĕрет аҫа пек йăпăшса.
Акă йал варинҫе
Лапҫăк пӳрт,
Сăнсăпаҫĕ илемсĕр, хура.
Сахал мар ĕмĕрте
Мĕскĕн çурт
Курса тӳсрĕ йӳçек хĕнхура.
Ҫуспа мар, улăмпа
Ăна витнĕ,
Тăрпи çук, ан та шырăр ăна!
Çамрăк мар,—
Вăтăртан та вăл иртнĕ...
Сыхласа пурăнать ҫухăна.
Лапҫăк пӳртĕн пуçри
Çи каштийĕ
Тем каласшăн мăнттай уйăха,
Картусси çĕтĕлсе
Пĕтнĕ хăйĕн,
Кĕрсе ӳкнĕ тĕппех хуйăха
Кĕрхи каç.

Ӑшӑ мар. Хайар ҫил.
Йупа уйёх. Вунҫитҫёмёш ҫул.
Лапҫӑк пӳрт,
Хӑвӑртрах вӑй-хал ил!
Тӑшмансем ҫумӑнта темён ҫул.
Ҫакӑ пӳрт ҫумёнҫех
Тепёр ҫурт,
Пуйан ҫын унпала ҫывӑх тус.
Икё хутлӑ
Пит ҫаплӑ ку пӳрт —
Пуҫёнҫе кӑвак тимёр карттус.
Митукка ҫаплӑ ҫын,
Арентаттӑр,
Пурӑнаҫ питё ҫуллӑ, ҫӑра—
Кам ӑна тӑрукак
Касса таттӑр?
Виҫё ҫын вӑл тытаҫ тарҫӑра!
Ак йепле сӑнсӑпат
Ҫакӑ йалӑн,—
Пурӑваҫҫё ҫынсем пёр пек мар...
Лапҫӑк пӳрт алӑкне.
Туртса уҫ,
Вёсем маннӑ ӑна питёрме,
Куртӑн-и ес ӑна
Савнӑ тус?

Макçăм ман куç хупса тĕлĕрмен!
Йаштака йаш аҕа
Тăрса ларнă,
Вăл ларaт̆ шухăшпа кĕрешсе;
— „Мĕн пирки Мит̆укка
Арентаттăр?
Мĕн пирки еп ĕçлеп кĕрĕшсе?
Харампыр ку таран
Мĕнпе пуйнă?
Мĕн пирки епĕ тарăç ăна?
Улталат̆. Вăл мана
Пайтах суйнă,
Йун ĕçесшĕн сабат̆ ҕухăна!
Сахал мар вăл пире
Улталанă,
Сахал мар мăшкăлларĕ калта.
Сахал мар вăл мана
Ҕышкă панă,—
Ак йепле алхасаççĕ йалта!
Шахт̆ор Ваçкă
Ҕăнах мĕн каларĕ:
— „Пуйансем йун ĕçеççĕ..." тесе;
Мĕнле çын пайан пуç
Усса ларĕ?!
Еп шанатăп кĕтни çитессе.

Совет влаçĕ çинђен
Ăнлантарђĕç,
Кантурта та илтсеттĕм ăна;
Хуп-хура шухăшсем
Тухса тарђĕç,
Совет çеç парĕ кун ђухăна!
Кунашкал пурăнса
Ĕç тухаймĕ,
Сывă пултăр саван хĕрлĕ çар,
Максăм тек Миђука
Пусне таймĕ,
Куршанак мĕне кирлĕ? Хуçар!..?
Йашă Максăм тăрса
Ура сырђĕ,
Уртса йађĕ унтах сăхманне:
— Атте, тăр-ха, тесе
Сăмах пађĕ,
— „Еп кайатăп, мĕн калăн анне?..“
Максăм ашшĕ
Кĕçех тăрса ларђĕ,
Ывăљне сапса пађĕ сăмах!
— „Ех, ађам, ăс-тăну
Ăçта тарђĕ?
Кирлĕ мар шухăш тытрăн, ухмах!“
— „Атте, ан йатлаç

Мана есĕ,
Еп кайатăп Советски çара,
Хĕрлĕ çар мĕнне халĕ
Пĕлместĕн...
Пайтах ҫăтрăм асап хуçаран!
Шухăш,—шухăш!
Есĕ питĕ шухă,
Ыталарăн ман çамрăк пуçа,
Пурĕпĕр çитмелли
Çĕре тухăп,
Пит асаймĕ киревсĕр хуçа...
Сывă пул, ан йатла,
Ҫипер йулăр,
Пĕр çакна çеç калатăп сана:
Миҭукканăн тарçи
Тек ан пулăр...
Еп кайатăп тухса Хусана."
Елекçей,—Макçăм ашшĕ
Хайаррăн:
— „Тăмана, тăна кĕр!
Аҫам ес!
Ара мĕн ухмаха тухса карăн?.."
Хурса илҫĕ улт-çиҫе хĕрес.
Макçăм тек унпала
Калаçмарĕ,

Тухса утрĕ килтеп Шăхрана,
Тӳпери уйăх çеç
Пăхса йулҫĕ
Пĕлĕтрен çамкине кăларса.

## II.

Шурă çурт. Ҫаплăскер—
Виçĕ хутлă,
Вĕлкĕшет пĕр йалав ун çинҫе,
Хулари сăн-сăпат
Пăхма тутлă.
Пурăнсассăн... Хăруш та киҫем.
Урамра етемсем
Кускалаççĕ,
Пĕлме çук, хыпăнаççĕ таçта;
Унтах пĕр-пĕрне
Тем калаççĕ:
—„Ҫорт пекех асрĕ, теççĕ—
Колҫҫак“.
Шурă çурт
Урама сас кăларнă,
Çурҫĕ ку Хусанти ласарет;
Ăшĕ ун куйккăпа
Тулса ларнă,
Ахлатса йăнăшни илтĕнет.

Мисе сас!?
Хисепне пĕлме йывăр,
Хăш-пĕрин ури çук,
Хăшин ал,
Пĕр тутар санитар
Калать: „çывăр,
Иптеш Максăм,
Кĕтетĕп, сывал“.
Нимĕн те шарламаст
Ăна хирĕç
Манăн Максăм, сурапла салтак,
Шуррисем сывлăхне
Унне çирĕç,
Тăхланпа суралантрĕ Колчак.
Максăмсем сахал мар
Вăй кăтартнă,
Шуррисем астăваççĕ ăна...
Шур çара Хусантан
Хуса тартнă,—
Тек килеймĕ Колчак Хусана.
Шуррисем чăтма çук,
Питĕ асрĕç,
Сахал мар çынна пусрĕ тăшман,
Кашни кун çĕршер пуç
Вĕсем касрĕç,

Анҫах путланҫĕҫĕ кайран.
Хĕрлĕ ҫар пит нумай
Астармарĕ,
Сирпĕнтерҫĕ тискер Колҫҫака,
Шуррисем хыпăнса
Тухса тарҫĕҫ
Хусантан шăл йĕрсе ҫак-ҫак-ҫак!
Манăн Макҫăм алли
Суранланнă,
Шуррипе вăл кĕрешнĕ хастар,
Ҫавăнпа сывалма
Кунта йанă,
Ҫавăнпа умĕнҫе саниттар,
Аллине суранлатнă
Пулсан та,
Куљљанмасť топроволътсă салтак,
Илтетни—
Халĕ те кăшкăрať вăл:
—„Толой! Сăнсăр йытă Колҫҫак!"
Хăшĕсем суранпа
Йăнăшаҫҫĕ,
Ҫавăн пĕк хĕрсе карĕ тĕнҫе,
Йăнăшу сассисем
Варкăшаҫҫĕ
Аслă ҫурт ласарет ăшĕнҫе.

III.

Тимкасси тумтирне
Улăштарнă,
Майĕпех туртăнаť çутталла,
Суранран манăн Макçăм
Сывалнă,
Курма çитрĕ çуралнă йала.
Калаçаť йаланах
Совет майлă,
Тĕлĕнтерђĕ ытла та йала:
—„Хĕрлĕ çар—пирĕн вăй,
Вут-кăварлă,—
Пуйана кун пулмасť малалла!“
Пĕрре, йалта пуху
Пулсассăн,—
Ăс-тăн пађĕ мĕнпур ђухăна,
Йантăрарĕ вара
Çивĕђ сасă,
Хытă çапрĕ Миťукка пуйана:
— „Пурĕпĕр шуррине
Аркататпăр,
Совет влаçĕ йулаť йаланах,
Пуйансен сăннине
Ђас хуçатпăр,
Пĕтĕретпĕр тискер йалана!

Ак илер — Миҫукка
Мĕнпе пуйнă?
Йе ĕçлет сынсенҫен хытăрах?
Сахал мар çынсене
Вĕсем суйнă...
Ултавпа пуйрĕ вăл ҫăн-ҫăнах!
Миҫуккашăн иртни
Пулнă ырă,
Çавăнпа та патшашăн вĕсем.
Ампарта пиншер пăт
Вĕсен тырă,—
Валеçер ун çĕрне, йулташсем!..“
— „Валеçес! Валеçес!
Терĕ халăх,
— Сахал мар вĕсем асрĕç йалта!
Ас парар акă хаҍ
Асăнмаллăх,
Пуйансем ҫăн-ҫăнах та калта!“
Хăшпĕри Миҫукка
Майлă пулҫĕç;
Тивес мар, текелеççĕ йăна,
Ҫухăнпа пуйансем
Хытă вăрçрĕç
Çĕнеймерĕç лешсем ҫухăна.
Миҫуккан шампийĕ

Пушанҫě,
Йалти халăх валеҫрě ҫěрне,
Харампырăн т у р р и
Персе анҫě—
Нисҫта вăл ҫикеймест ҫиллине,
Митукка харампыр
Пуҫне тайнă,
Хăй тарҫийě шěветрě ăна,
Пăл шаккат—шутсăрах,
Эрса кайнă;
—„Мěскерле лектерес!?,“ тет—кăна.
Саал мар туррине
Тарасларě,
Ҫивčлетрě—ҫуталҫě киншал,
Шăлне шаккасах
Вăл кларě;
— „Теěр хут алла кěрěн-ха йал!
Максăм кунашкал
Култармшкăн
Митукка ирěн пек ухмах мар,
Асту, ытлшши
Ес ан ашку!
Еп сан пек кěлмěҫ мар“...
Уйăх ҫурă йта
Пурăнсассăн

Макçăм карĕ каллех салтака,
Тăрса йулҫĕ йала
Тĕрлĕ сасă...
Митукка вĕлерме шăл шаккаҫ̆.

IV.

Çулла Лăпкă каç.
Сас-мĕн çук.
Карăш çеç картлатаҫ̆ кассăн-кас.
Акă улăх,
Ăна пăхса тух...
Пит илемлĕ тăраҫ̆ çакă каç.
Улăхра аслă çул, ӳснĕ çĕлĕ,
Тавралла варкăшаҫ̆ уçă шăрш.
Мал йенне кăвак çут
Хыпса илнĕ,
Ăшă çил ҫӳхенет вăш-вăш-вăш.
Аслă çул хĕрринҫе
Хавасланнă,
Пуç тураҫ̆ çăмăлттай хурама.
Ун айне пĕр маттур
Канма ларнă,
Ăнсăртран кайнă хăй çывăрса.
Вăхăтпа ăшă çил
Варкăшсассăн,

Сулланса ал çупаť хурама,
Хăнана çемçе çил
Йăпатаспăн
Йерипен ађашлаť лăпкаса.
Хурама айĕнђе
Пĕр етем,—
Çывăраť ним пĕлми ăйхăра.
Пит-куçне витнĕ вăл
Шинелпе.
Тўрĕ çын. Ес унтан ан хăра!
Сăн-пуçран паллама
Ăн йывăр,
Пуçне çыхнă шап-шур тутăрпа
Ей йĕкĕт ытлашши
Ес ан çывăр!
Сан пана çывхараť урапа.
Шăпăртăх улăхра.
Сас-мĕн çук,
Урапа сасси çеç айакра,
Хурама айĕнђе
Выртаť Макăм:
Таврăнаť вăл килне салтакран!
Çĕрлене нимĕкте
Уйамасăр,
Васкасă пур вăйран утнăран,

Виҫ сехет хушшинҫе
Ҫирĕм ҫухрăм
Шăхрантан утнă вăл ку таран.
Ал-ури шуралса
Пĕтсе кайнă,
Суйлансах ҫыврат ним пĕлми,
Кĕпине тар шăрши
Ыталанă,—
Уйăх ҫеҫ вăрҫăран уйрăлни.
Виҫĕ хут шăмшакне
Суранлатнă,
Шуррипе вăл кĕрешнĕ хастар.
Пуҫĕ ватнă...
Йанахне расрывной
Пайтах тăкнă йунпа хура тар.
Виҫĕ ҫул шуррипе
Вăл кĕрешнĕ,
Виҫĕ ҫулăн хушши кĕске мар,
Харампыр таврашне
Пĕтерессĕн
Виҫĕ ҫул ҫапăҫаť хĕрлĕ ҫар.
Улăхра ҫил ҫуpať
Кассăн-кассăн,
Хумхатаť хăйсўҫне хурама.
Вĕҫсе ситрĕ киҫем

Ӳсӗр сасӑ—
Темле ҫын ӳркенмест йурлама?!
— „Ыр ӗҫрӗмӗр, ҫирӗмӗр
Йртсе кайаӑ ыр ӗмӗр,
Йурла кумма, йантраттар—
Епӗр наӡар етем мар!..“
Хурама патнеллех
Ҫывхараҫҫӗ,
Ҫул выртаӑ унпала йунашар.
Йурлакан ӳсӗр ҫын
Сасӑ паӡӗ:
— „Тпруу! Ӡорт воҫми тухса ӳкрӗ
кусатӑран,“
Хурама тӗлӗнӡех
Лаша тӑӡӗ,
Сиксе анӡӗҫ ҫӗре виҫ етем,
Тем пирки лахлатсах
Хытӑ кулӡӗҫ,
Пикенсех йумахлаҫҫӗ хӑйсем:
— „Йерипен, кӑшкӑрса
Ан калаҫ ес,
Халӡ пире сыхлакан сахал мар;
Ах, мӗнле
Совета пӗтерес?
Пуйана кураймасӑ комиссар...

Акӑ спӗр ыраш
Турттаратпӑр,
Ӑсататпӑр хуллен стантсана;
Лешмурсем хӳтерсессӗн
Таратпӑр...
Миҫукка, ху пӗлетӗн ӑна...“
Кусатӑран таҫта ҫитийӗ тарҙӗ.
Анҙах ӑна тупса пӗри
Калле вырнаҫтарҙӗ.
— „Пире спеккуљант
Текелеҫҫӗ,
Ну-тӑк штош, епир спеккуљант;
Пирӗн алӑра ылттӑнсем
Сиккелеҫҫӗ,
Пӗтерейменҫ пире ан куљљан...
Апошти, Миҫукка,
Пӑхха есӗ,—
Хурама айӗнҙе пӗр етем...
Кам ку ҙоррт?
Тен вӑлах комсомолӗс...“
(ҙышкӑланҙӗҫ кӗҫех аллисем).
Пӗри:
— „Пуҫтакки айтӑр“... терӗ
— Миҫукка, хатӗри киншалу сан?
Ӳлӗмрен спеккуљант

Камне пĕлтĕр...
Мĕн ђăрманмалли пур унпалан!“
Ним пĕлми ыйăхра
Манăн Макçăм,
Вăл ĕшеннĕ, вăлă çывăрат.
Пĕшкĕнсе, йерипен
Питĕ вăрттăн
Ун патне ак тăшман çывхарат.
Çитсе тăђĕç.
Тискеррĕн пăхаççĕ.
Мутукка кĕç палларĕ ăна.
Какан, киншалсем
Выљанаççĕ,—
Макçăм, тăр, сирсе йар ăйхуна!
— Ы-ы-ых, ђорррт!
Аранах мĕн çакланђĕ,
Тахçанах епĕ кĕтнĕ кăна;
Аранах кунĕ ун
Персе анђĕ...
Тăвансем, пĕтерес çакăнтах.
Вĕрентер çĕрсене
Валеçмешкĕн,
Вĕлерес, вĕлерес, хăвăртрах;
Ыррине унтан пуљмĕ
Кĕтмешкĕн,

Славă пох... Ак телей, ха-ха-хах!
Ман çĕре çак шуйтан
Валеçтерђĕ,
Туртса илђĕç унпа халăхсем;
Ђăтма çук ђĕрене
Кӳрентерђĕç,
Каçару ăна çук, ну... ђикем".
Мӗтукка шутсăрах
Хавасланнă,
Тав тăваӗ туррине сăх-сăхса;
Киншалне тахçанах
Вăл хăйранă,
Çавăнпа вăл выђаӗ çуталса.
— „Тăхта, Мӗтукка,
Итле есĕ,
Наканран перес..." терĕ кумми.
Çавăнтах хыпăнса
Лĕпĕс-лĕпĕс
Тăвралла ђупкаларĕ Çумми.
Çумма—Тимкасри
Йал куштанĕ,
Йуратаӗ йуншала ал çума;
Сахал мар лашасем те
Вăрланă—
Сăнсăр шулĕк сăвмасӗ Макçăма.

Ӑçтан Макçăма
Вăл йураттăр?
Контрипутси партарнă ăна.
Вăл пуйан, вăлă
Арентаттăр,
Ђĕререн кураймасť ђухăна.
— „Çук-çук-çук!
Ей, кумма, тăхта есĕ,
Унашкал йурамасť, пулĕ сас;
Ђĕрине киншалпа
Ђĕпĕтсессĕн—
Аванрах ку ĕç пулĕ. Пусас!"
Миťукка тек нумай
Калаçмарĕ,
Киншалпа ђикрĕ йашт Макçăма.
Киншалпах мăйĕнђен
Пырне татрĕ..
Макçăм-Макçăм! Вĕлерђĕç сана.
Пуйан вăл йун ĕçме
Йуратаť,
Çын пусма пит ăста ун алли,
Миťуккан кĕтнĕ ĕмĕт
Çывхараť,
Выљанаť аллинђе киншалли.

Сӳнсе ларҫӗ Макҫăмăн
Кун-ҫулӗ,
Миҭуккашăн ку пысăк телей;
Савăнса пуйансем
Лăх-лăх кулҫӗҫ
Миҭукка мухтанаҭ хăйпеле:
— „Ҫӗререн киншалпа
Пăтратсассăн—
Моменттаљнă, љупой ҫорт вилет;
Ну, кумма, турруна
Ёнтӗ асăн...
Айта, хăвăртрах, килелле!
Асту, ҫакă ӗҫ
Ăшра пултăр,
Стантсăна манер ҫук... кайас мар;
Ку навус ҫакăнтах
Выртса йултăр,
Тинех татăлҫӗ ирсӗр тымар!“
Макҫăм сăнӗ
Шап-турă шуралҫӗ.
Путарҫӗҫ ак салтакăн халне.
Вӗри йун хуралса
Йухса анҫӗ,—
Ҫитеймерӗ ҫуралнă йалне.

## V

Октăпĕр пулни—
Вунтăваттă.
Çирĕпленђĕ Советăн саккунĕ.
Митукка умĕнђе
Телей катăк,
Туррисем çĕрсе кэрĕçĕ унăн.
Пахђари куршанак
Хăрса ларђĕ,
Ун пек-курăк, пире кирлĕ мар.
Тĕпренех вăлă хаљ
Хăрса ларђĕ,
Тинех шанђĕ киревсĕр тымар.
Куршанак Митукка
Тек ан ашкăн,
Тарăхтартăн пайтах ку таран.
Вăхăт çитрĕ тинех
Тавăрмашкăн—
Пайан ху куççуљне йухтаран!
Аранах çĕршывран
Мăшкăл тарђĕ,
Ђăмрĕ, ђăмрĕ пуйанăн сасси.
Кивĕ йал тумтирне
Улăштарђĕ,
Колхосланђĕ кăçал Тимкасси.

Мăшкăлра пиçĕхнĕ
Ĕçлĕ халăх
Миŭукка куштана
Асăнмаллăх,—
Сирпĕнтерђĕ тĕппех Тимкасран.
Макçăма йаланах
Асăнаççĕ,
Унăн йађĕ йалта йанăраŭ.
Колхоса „П а р т т и с а н"
Йатлă пађĕç,
Çитмĕл кил кунта халĕ тăрат.
Малаллах кунран-кун
Ыткăнаççĕ
Комунисăм патне малалла;
Кулаксен сăннине
Касса татрĕç,
Хурçă трактăр çитерђĕç йала,
Миŭукка кил-çуртне
Туртса илнĕ,
Çамрăксем вĕренеççĕ унта;
Хуларан уђђиттĕлĕ те
Килнĕ,
Хŭхĕм шкул пулса тăђĕ кунта.
Пролеттари саккунĕ
Пит çирĕп,

Хирĕçле, кирлĕ мар ĕç ан ту.
Митўкка сахал мар
Етем çирĕ,—
Çапса хуçрĕ тинех Ке-Пе-У,
Тăшмана раскулађђĕт
Тусассăн,
Тухса тарђĕ асма пантăна.
Йун ĕçес шухăша
Тек ан асăн,—
Ке-Пе-У йарса тытрĕ сана.
Кашкăра çупала
Усрасан та—
Пурĕпĕр кĕтме çук пархатар.
Кулаксем ку таран
Пайтах аснă,
Тĕппипех вĕсене аркатар!
Мĕне кирлĕ текех
Пĕђђен пурлăх?
Кама кирлĕ киревсĕр пуйан?
Ђухăн тўсрĕ ȧвал
Пайтах хурлăх—
Митўкка асаймĕ пайан...

* * *

Ташласа йухакан
Çавал шывĕ,

Чувашская Книжная Палата
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. экз. № 25

Васкаса шăвăнаç хумсем сан.
Тимкасси пурăнаŤ
Халĕ сывă,
Кунран-кун вăйланаŤ „Парттисан“.
Макçăма йаланах
Асăнаççĕ,
Унăн йађĕ йалта йанăраŤ.
Ашшĕне Совета
Вырăн пађĕç,
Комунис, парттире вăл тăраŤ.
Малаллах кунран-кун
Вĕçтереççĕ
Комунисăм патне малалла.
Кулаксем пĕтнĕрен
Хĕпĕртеççĕ,—
Револђутси çĕнетрĕ йала!

## Тупмалли

**Кӗрешӳ сӑввисем** стр.

Малалла . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Колхосра . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 8
Уљљана . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 11
Пурнӑç—кӗрешӳ . . . . . . . . . . . . . 14
Кулак тӑтӑр айакра, ђухӑн пултӑр советра . 19
Ирхи шухӑшсем . . . . . . . . . . . . . 22
Комсомолӗс поета . . . . . . . . . . . . 24
Кивӗ пурнӑç маншӑн йут . . . . . . . . . 26
Кели Кӗркурине . . . . . . . . . . . . . 31
Ӗçхӗрарӑмне . . . . . . . . . . . . . . . 37
Суйлав йурри . . . . . . . . . . . . . . 40
Колхоçнӗк йурри . . . . . . . . . . . . . 43

**Йӗплӗ сӑвӑсемпе такмаксем**

Урам тӑрӑх пынӑ ђух . . . . . . . . . . 46
Такмаксем . . . . . . . . . . . . . . . . 48
Карт ӑстисене . . . . . . . . . . . . . . 50
Михалкка . . . . . . . . . . . . . . . . . 52
Тӑнсӑр слушӑшђи . . . . . . . . . . . . 55
Самокриттӗк такмакӗсем . . . . . . . . 58
Конешнӑ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 61
Йӑкӑнат хуйхи . . . . . . . . . . . . . . 65

**Хӗрлӗ парттисан (поемӑ)** . . . . . . . 69

Закончено в наборе 26 октября. Вышла из печати 29 октября 1932 г.
Ст. ф. 62×94 см. 3 печ. л. В печ. листе 41.640 зн.

ХАКЕ 60 ПУС.
ЦЕНА 60 КОП.

Х-3

# МАРК АТТАЙ

# МОЛОДЫЕ ПОБЕГИ

(СТИХИ)

ЧУВАШГОСИЗДАТ — ЧЕБОКСАРЫ
1932